Чебоксарская
Ц. Б. им. Горького

Пётём тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938
МАРТ
5
ШАМАТКУН
52 (4865)-мĕш №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ:
Город Чебоксары,
ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактăран 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

Чăваш Автономлă Советлă Социалисăмлă республикĕ, Тутар Автономлă Советлă Социалисăмлă республикĕ тата Мордва Автономлă Советлă Социалисăмлă республикĕ хушшинчи социалисăмлă ăмăрту

ДОГОВОРĔ

ССР Союзĕнчи халăхсен генипе çулпуçĕ Сталин йулташ çулсеренех 7—8 мĕлйард пăт тĕштырă туса илесси çинчен панă катартусене пурнăçа кĕртме Чăваш Автономлă Советлă Социалисăмлă республикĕ, Тутар Автономлă Советлă Социалисăмлă республикĕ тата Мордва Автономлă Советлă Социалисăмлă республикĕ, Сталинпа виççĕмĕш пăтăлетткăн перремĕш çулне кĕрсе, колхозниксен, трактористсен, йăлхуçăлăх ăстаçăсен ăнăç массисем пуçарнипе, 1938 çулта пур куçтурăсем тăрăх та пысăк тухăçа тыркун туса илес тĕллĕпне социалисăмлă ăмăрту договорне туса çирĕплетрĕç.

Чăваш Автономлă Советла Социалисăмлă республикĕ хăй çине çа кăн пек обязательствăсем илет:

1 Республикă тăрăх гектар пуçне 100-шер пăтран кайа мар тĕштыра, 4,5 центнертан кăна мар пĕрĕн çуçĕ, 5 цент. кайа мар кантăр сусĕ, макорка—20 центнертан кăна мар, сĕрулми—150 центнертан кăна мар, клевер вăрлăхĕ—2,5 центнертан кăна мар туса илме пулать.

2. Тĕштырă, йĕтĕн тата кантăр продукцине, сĕрулмине, пахчаçимĕçсене тата клевер вăрлăхне пĕтĕмлетнех правительства палăртса çирĕплетнĕ сроксенче парса татма пулать.

3. Чăваш Автономлă Советлă Социалисăмлă республикинчи колхозсемпе МТС сем çакнашкал агротехникăлă ĕçсене пурнăçа кĕртме пулăçсĕ:

а) 1938 çул тăрăшĕнче хирсене 10 мĕлйун лав тислĕк кăларма;

б) 1 мĕнăн тонна торф кăларса хатĕрлеме;

в) йăровизацилене вăрлăхсемпе 100 пин гектар акса хăварма;

г) машинăсемпе 400 пин гектар акса хăварма;

д) ир акмали тĕштырă-культурисене 6—8 кун хушшинче акса пĕтерме;

е) кĕркри тырă тата йĕтĕн акнă лаптăкăн калчасене 20% пан кайа мар апат пама;

ж) кĕркри тырă тата йĕтĕн акнă лаптăкăн калчасене 20% пан кайа мар апат пама;

з) çурхи тулана йĕтĕн акнă лаптăка 25 процентран кайа мар витĕ сусе хумă (мулчировани тума);

и) июнăн 1-мĕш тĕлне таса çĕтме лаптăкĕнчен 85 процентне ирхи çĕртме тума;

к) кĕркри куçтурăсене августăн 28-мĕш тĕлне акса пĕтерме, ăнăç пĕтĕмĕшпех машинапа акса хăварма. Тырăсене кĕске сруçра тата ним тăкаксăр пухса илме;

л) пучăхлă тырăсене 100 процентĕпех суртлă вăрлăхсемпе акса;

м) кĕркри çĕртме тăвас плана 1938 çулти октябрĕн 1-мĕш тĕлне тулăрма.

4. Аксаса пĕтĕмĕшпех лайăх суртласа тасатнă тата кондициле вăрлăхсемпе акма; туляна, сĕлне, урпана, вире тата йĕтĕне 100 процентĕпех вутпуçĕрпен чăкесе акма; извĕпе тата çĕре çемçетсе лайăхлатмăли минерал çăнăхĕсемпе май килнĕ таранах пысăккăн усă курма.

5. Вăрлăх участкисене сулласа илнĕ суртлă вăрлăхсемпе акма вăл участкисене катартулă лайăх пăхса тăрасенне тата унта лекнĕ суртлă мар вăрлăх калчисене çумласа тасатассине пурнăçа кĕртме.

6. Кĕркине çурхи тырăсем акнă лаптăка пĕтĕмлетех çумкурăкеннен тĕплĕн тасама, уйăсене пĕр çумкурăкĕсĕр тиса тытса тăма.

7. Трактор сене, тракторсемпе ĕçлемели тата лашапа ĕçлемели йăлхуçалăх машинисене мартăн 15-мĕш тĕлне йăсаса пĕтерме, тырă вырнали машинисене апрелĕн 15-мĕш тĕлне йăсаса пĕтерме.

8. 1938 çулта МТС-сем тăрăх вăтам шутпа çакăн чухлĕ ĕç тумалă:

а) 15 лашапа вăйлĕ СТЗ—ХТЗ тракторсемпе (çемçе суха çине кусарса шутласан) 700 гектар сухалăмăла;

б) ЧТЗ тракторпа 2000 гектар сухалăмăла;

в) 16 фут сарлакĕш илекен комбайнпа 300 гектар вырса пухмала;

г) МК-1100 молотилкăпа 1000 тонна тырă çапмала.

9. Трактор ĕçĕн хакне 1938 çулхи планран 3 процентран кана мар чакарма, çунтармалисене 3 процентран кайа мар перекетлеме.

10. 600 колхоз председателне квалификацине ӳстермели шкулра вĕрентесе кăларма.

11. 1938 çулта çĕнĕрен 1000 трактористе вĕрентсе хатĕрлемелле.

Чăваш Автономлă Советлă Социалисăмлă Республикине Сталинпа 7—8 мĕлйард пăт тĕштырă туса илесшĕн, йĕтĕн, кантăр, сĕрулми т. ыт. куçтурăсен пысăк тухăçлăхĕшĕн пыракан Пĕтĕм Союзри социалисăмла ăмартава хутшăнат тата Пĕтĕм Союзри йăлхуçăлăх выставкинче пулма тивĕç илес задачă, ПСК(б)П Тĕпкомĕпе Халăх Комис арĕсен Совечĕ хура тапрал ма обласĕсем çинчен йышăнна решенине пурнăçа кĕртни çинчен Сталин йулташа рапорт пама тивĕç илес задачă лартать.

Договор çине ала пуснă:

1. Л С Спасов—Чăваш Автономла Советлă Социалисăмлă Республикин Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ.

2. Г. И Иванов—ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн секретарĕ.

3. С. К. Коротков—Чăваш АССР Çĕрĕç Халах Комиссарĕ.

4. Баранов—ПСУЛКС Обком секретарĕн иккĕмĕш заместителĕ.

5 Давыдов—Куславкка районĕнчи Чăнкасси йăлĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ.

6. Бурмистров—Йĕлчĕк районĕнчи „Çĕнĕ Иштерйаково" колхоз председателĕ.

7. Храмов—Хĕрлĕ Чутай районĕнчи „Радно" колхоз председателĕ.

8 Захаров—Ишлей районĕнчи МТС директорĕ

9. Й А. Андрейев — Сĕнтĕрвăрри районĕнчи „Йелниково" колхоз председателĕ

10. Д. А. Антонов—Шупашкар районĕнчи Бановьк йалсоветĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ.

11. Андрейева—Сĕнтĕрвăрри районĕнчи „Чурачăк йалсовĕнчи „Пучах хумă колхоз председателĕ.

12. Жарков — Варнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ.

13 А. Чекменева—Çĕмĕрле районĕнчи „Красноармеец" колхозни звеноновĕ.

14. М. Ф. Ширмэко а — Патăрьел районĕнчи М. Горький ячĕпе тăракан колхозран.

15. Ф. Г. Горбунов—Йĕтĕрне районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхоз председателĕн заместителĕ.

16. И. С. Нестерова—Шăмăршă районĕнчи „Мекш" колхозăн пăру пăхакане

17. А П. Миронов—Елĕк районĕнчи Вырас Сурамĕнчи колхоз председателе.

18. А. Иваблонский — Улатăр районĕнчи „Путь Ильича" колхоз председателĕ.

19. А. Г. Гайазов — Шăнкăртам районĕнчи „Марс" колхоз председателĕ.

20. Л. Д. Остряков—Патăрьел районĕнчи „Хĕрлĕ Туçа" колхоз председателĕ.

21. В. С Степанова—Шăхасан районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхоз бригадирĕ.

22. М. К. Иефимов—Трак районĕнчи „Коминтерн" колхоз председателĕ.

23. А. Н. Йуркин — Турхан районĕнчи „Çĕнтерӳ" колхоз председателĕ.

24. П. А. Петровский — Вăрмар районĕнчи „Майак" колхоз звеноновĕ.

25. А. Й. Йефремов—Йĕпрес районĕнчи „Путиловка" колхоз председателĕ.

26. А. Козлов—Тăвай районĕнчи райçĕрĕç пайĕн пуçлăхĕ.

27. С. Ф. Филимонов—Канаш районĕнчи „Хĕрлĕ Çалтăр" колхоз бригадирĕ.

28. Л С. Давыдов—Тутаркас районĕнчи райçĕрĕç пайĕн аслă агрономĕ.

26. Г. В. Бочков—Кувакинăри МТС директорĕ.

Совета хирĕçле „сылтăмла-троцкисла блок" процесĕ

Мартăн 2-мĕшĕнчи каçхи лару

ССР Союз Верховнăй Сучĕн Çар Коллегийĕн мартăн 2-мĕшĕнчи каçхи ларуĕнче „сылтăма-троцкисла блок" заговорăпа ушкăнĕн чи палăк участникне, фашисла разведкăсен агентне, Совет Союзĕн финанс ĕçĕнчи сăтăрçăна—айăлланакан Гринько пăсма пуçланнă.

Гринько, малтанхи следствире каласа панисене пĕтĕмлетех тенĕр хуть йышăнса, вăл ССР Союзне хирĕç калама çук йăнăр преступленисем туннине йышăнать.

Гринько темиçе çул хушши совет власне хирĕç Шумскийпе тата ытти сене пĕрле вăрттăн, активлă кĕрешсе ыннине йышăнат, повстанически отрăдсем организацилес ĕçе, çавăн пекех совет сĕрпынĕн территорийĕ çине диверсантсене, петлурăн емиссарĕсене тата вĕсем вадăн хĕсăнăлăсем илсе килес ĕçе хуттăнса çленĕ. Националисăмла организацине тата тытăлăхçи тата Гринько кăйăн сутăнчăкăл ĕçне пăрахман. Вăл тăшманла разведкăсемпе сыхăннă. Гринько кăтартса панă тăрăх, вăл 1935 çулта Лубченко хушшине Украинăра малтанах пуçланă националфашиспе организацине кĕнĕ.

Украинăри националфашиссем Совет Союзне хирĕç, фашисла государственнăй ĕçĕпшăлăла интервенцине организацилес задачăна лартнă. Çак тĕллĕпе Украинăри националфашиссем „сылтăма-троцкисла национал-фашиссем сборничĕсене тухăçлăхлă блок"на, çарти заговорщиксемпе Тухачĕвскине тата ытти сене те сыхăнна. Çак вăхăтрах Гринько, хăй каланă тăрăх, Совет Союзне хирĕçлĕ пĕр государствăн „влăхăн парса тăракан ушкăнĕсемпе" сыхăну туса хунă. Посредниче Кроссинский пулнă.

Гринько совета хирĕçле „сылтăм-троцкисла блокăн" палăк запрашăссемпе—Гамарникпа, Рыковпа, Шăнтаковпа сыхăнса тăнă. Блокăн тĕп ĕçĕ—фашисла агрессорсен интервенцине тăвасси пулнă, тесе Гринько кăтартса парат.

Государствăн йăнĕне айăллакан Вы-туса пырас тĕлĕшпе Рыковран кăтартусем илнĕ.

1928 çулта, айăлланакан Чернов йутçĕршывра сывалма кайма хатĕрленсен, ăна Рыков Берлинра Данна сыхăма задани панă, капиталисла çĕршывсенчи обществăлă шухăшсене-Совет Союзне хирĕç тăратма, никĕмĕш интернационал лидерĕсем урăх Совет Союзне хирĕç пулăсенне вăйлатма, çĕршывра „сылтăма-троцкисла блок" власа хăй аллине илесе хăй аллине илтесе ĕç, ĕçсем пуçăнассине халех татса хума Данпан вăтăм хушнă. Çак Рыковпа Чернов хушшинче пулнă касăрлуна Томский те хутшăнăк. Рыков та, Томский те Чернован „сылтăм-троцкисла блок" власа хăй аллине санăрса илсессĕн, буржуалă сĕрпынăсемпе экономикла мăтусеме килĕнĕ тăвассипех пуçне, тата территорине пĕсене пама хатĕрĕн çинчен Дана уçăлнах калама Чернова хушнă. Рыков Чернова буржуалă пичетсем çине тендейпоссăл, Совет Союзăн чăнăлăхне тĕрĕс мар тăратакан пĕлтерĕсем пама хушăт.

Вышинский. (Рыкова). Есĕр Чернова Берлинра Данпа сыхăма хушнă-и?

Рыков. Сапла.

Малала, Прокурор Вышинский йулташ паракан мăтусем çине ответлесе, айăллакан Рыков вăл менше ыннисем „социалистический вестник"не Совет Союзне хирĕçле материалсем кулленех парса тăнăн çинчен пĕлтерет.

Чернов малала Рыков хушшине пурăçăлан, Данпа калаçăн çинчен калаç.

Вышинский. Айăлланакан Рыков, сире Чернов есĕр хушшине пурăçăлан çинчен калаçа пачĕ-и?

Рыков. Сирĕлтететĕн. Чернов мĕн хушшине пурăçăлăр.

Айăлланакан Чернов суда кайгартса панă тăрăх, Чернов Берлинра пулнă вăхăтра, ăна нимĕç разведкине йăвăртарнă пулнă. Чернов Совет Союзне шпион пуçа „Рейнгольд" суйă йăтна тавăрăнат.

Кĕçех Москавра Чернов патне нимĕç журналисĕ Науль Шеффер ырат, уран промышленнăйăн тавăрăсен çанăсĕ, тырнул хатĕрлес ĕç ĕнĕлле ыннăн çинчен тата ытти шпионла сведенисем ыйтат. Ыйнăн Чернов çак нур сведенисене те нимĕç разведкине парат.

Чернов малала суда кайгартса панă тăрăх, вăл нимĕç разведки тата „сылтăм-троцкисла блок" хушнă тăрăх, тырнул сĕртни тата пăсни курăнат. Чернов судра, вăл йăлхуçалăхĕнче калама çук пысăк сăтăрçа ĕçсем организацилени çинчен, вал хушшине выльăх-чĕрлĕхсене чума йĕртсе пăрахнăй тени, ăратăла аçа-пиллăхсене кастарни çинчен кайгартса парат. Айăлланакан Чернов хушшине темиçе пушшăр ыни сыснасем пĕтăт пулнă.

Вышинский. Аса илместĕр-и есĕр, çакăнпăн нимĕç разведкинчен мĕн-чул пытĕр?

Чернов. Вăтăр ыни нимĕç маркине тата 150 пин тенкĕ пахăн Совет ӳкĕне илнĕ.

Чернов суда каласа панă тăрăх, Рыков ушка каннăн тĕл пулмассеренех йăлхуçалăхĕнче диверсине сăтăрçа ĕçе пăрахма пăтăлă.

Вышинский. (Рыкова). Есĕр айăлланакан Чернов кăтартса панине, Чернована пулнă сыхăнăвăн хакне йышăнатăр-и?

Рыков. Сапла. Чернов калани сене ăна панă кăтартусемпе нĕр йенĕрех.

Вышинский. (Чернова). Çак Рыков пек руководителсем сирĕн пумай пулнă-и?

Чернов. Рыковсăр тата нимĕç разведкисĕр пуçне никам та.

Айăлланакан Чернова допрос туса пĕтернĕ хыççăн каçхи лару хупăнат.

(ТАСС).

Мартăн 3-мĕшĕнчи ирхи лару

Мартăн 3-мĕшĕнче, ССР Союзĕ Верховнăй Сучĕн Çар Коллегийĕн ирхи ларуĕнче, ун малтан, айăллаланакан Ивановран ыйтаççĕ. Иванов патша охранкин опытлă провокаторĕ пулнă Кайран вăл Англи разведкинче танăç. Иванов совета хирĕç вăрттăн кĕрешекен „сылтăма-троцкисла блока" хастарлăн хутшăнакансенчен пĕри пулнине хăй те йышăнат. Иванов хăйĕн кăтартса парат 1911 çулта Тулара вăл жандарм управленин агенчĕ пулса, укçа илсе тăнă. Маматкизин-ротмистр çинчен ыйтса пынине „воспитани" илме пикеннĕ.

Çапла пуçланнă айăпланакан Иванован „политика тĕлĕшĕнчи есĕ"

Вышинский прокурор айăпланакана тăтăшах ыйтусем парса, вăл большевиксен партине мĕнле хĕсĕнсе кĕме пултарни çинчен ыйтса пелет. Иванов йепле хăй çулăнă, тата, жандарм подполковникĕсе Колколов кăтартса панине, большевиксен партине кĕнине йышăнат.

Малашнехи допросран çака курăнат: революци хыççăн, Иванов совет власне хирĕç кĕрешме тăшманла вăйсем пухасăн пур майпа та тăрăшнă. Хăй калашле, вăл вилĕ çине вĕçекен çăхан пекех, киреплепле тăшманла ушкăнсене те хуттăннă.

Иванов „сулахай" коммунисем 1918 çулта Ленина мĕнле велерме тăни çинчен, йепле вăл Бухарина çултан çул çирĕплех сыхăнса пыни çинчен каласа парат. 1928 çулта, Çурçĕр Кавказра ĕçленĕ чухне, Иванов Бухаринран сылтăммисен вăрттăн ушкăнне çирĕплетме тата Çурçĕр Кавказ ра кулаклă вострани тума задани илнĕ. Анчах, ăна пурнăçа кĕртме тăрсан, ĕç тухман, Иванов вара Çурçĕр крайне куçна. Бухарин каллех вăра, интервентсем тăпансан совет власне çĕнтермелетума, сăтăр çене, диверçи ĕçне çарма, террорисла ушкансем тума, йулашкинчен тата йутçăршыв государстви майлă шпионла ĕç туса пыма сĕнĕ директива парат. Бухарин хăйне Англи разведкине пулашма вĕрентнине Иванов çирĕплетет.

Иванов малала суда Бухарин ӳлĕм хăма çуракан заводсене ăнăçлăнсене концессине пама „палăртни" çинчен тата совет власĕ тунă хăма çуракан çĕнĕ заводсене патша парăмĕсем шучĕпе парса пĕтерме „палăртни" çинчен каласа кăтартат. Кусем—малашнехи пленум пулнă. Анчах та „аванс" шучĕпе, „сылтăма-троцкисла блок" сутăнчăкĕсемпе ултавăсăсем Англи буржуазине мĕлйуншар тенкĕлĕх чи лайăх йăвăçа йӳнĕ хакпа сутса пынă.

Вышинский. Сирĕн—воспитани мĕнле пулни татăкласах палăрат. Есĕр хăвăран политикă тĕлешен чи воспитанине Тула охранникĕнчи Маматкизин-ротмистр йĕртсе пынине пуçланнă, Бухаринпа Рыков йĕртсе пынине—пĕтерне. Терес ăнăçтаран-и ĕнĕ сире?

Иванов. Тĕрĕс...

* * *

Кăшт тăхтарăхма, айăллакан 3 бареннан ыйтса тепчеме тытăнăçĕ. Зубарев „сылтăма-троцкисла блока" хастарлăн хутшăнакансенчен пĕри, патша охранкин агенчĕ, фашиссен шпионĕ пулнă. Маматкин следствир хăй кăтартса панисене вăл пĕтĕмлетех йышăнат.

Унăн мĕнле хăй малтан Урялра, ун хыççăн—ССРС тата РСФСР Çĕнĕç Халăх комиссариачĕсенче сăтăрçа тата диверçисĕлĕ ĕçсем тума пыни çинчен каласа кăтартат Сав вăхăтра вăл йутçĕршывра пĕр патшалăхăн фашисла разведкин шпионĕ пулса пурăннă тата вăхатран-вăхăта хунта секретлă сведенис м парса тăнă . Çĕрĕç Халăх Комиссарнатĕнче Зубарев террорисла ушкăнсем организацилене, çав ушкăнсене вара хăй те хастарлăн хутшăнă. Вăл Молотов йулташа вĕлерме хатĕрленнине хăйĕх тунмаç.

Вышинский йулташăн ыйтăвĕсем çине ответлес майпа Зубарев малала хăй патша полицин агенчĕ пулса, провокаторла ĕçсем туса пыни çинчен каласа парат.

Государствăн ĕнĕпе айăплакнăç—Вышинский йулташ ыйтни тăрăх, суд, свидетел шучĕпе, Котелнич хулинче полици приставĕ пулнă Васильйевăн ыйтат. 1908 çулта Васильйев Зубарева патша охранкин агенчĕ кĕртнĕ. Ситменнине тата ку ĕçе тăвасси те унăн „ытла йăвăрах" пуçман. Зубарев хăйне вăлăн клинкине те (Васильйева) хăйех тунă. Провокаторла ĕçсем тунăшăн Васильйев Зубарева икĕ хутчен 30-шар тенкĕ панă.

Айăпланакан Зубарева допрос тунă хыççăн кăнтăрлахи лару хупăнат.

.ТАСС

(Мартăн 3-мĕшĕнчи каçхи лару çинчен 4-мĕш страницăра вулăр).

Чăваш ĕçхалăхĕ фашиссене сутăннă бандитсене перçе пăрахма ыйтать

Ирĕçĕр тăшмансене пĕтĕм халăх тарăхса ылханат

ШĂХАСАН. (Телефон тăрăх). Бухарин, Рыков, Иагода тата „сылтăм-троцкисла блок" ушкăнĕнче тăракан ытти бандитсен тĕлĕнмелле ирĕçĕр ĕçĕ тăрăх айăллаçа сыркине радиона итленĕ тата хаçатсенче вуланă хыççăн, районри ученредденсемпе, шкулсенче, колхозсенче массăлă митингсем пуçса ирттеçĕç. Митингсенче пулнă пĕтĕм халăх çав бандитшпионсене чĕререн курăнманнине кăтартса парат.

Партин районри комитечĕпе райкомол работникĕсем митингсенче Сорокин йулăнă çапла каларĕç:

— Бухарин, Рыков тата вĕсен бандиташăйăксем ăнăçăн та пирĕн çынсем пулман, Совет власĕ пулăçранах ăна пĕтерес, унăн сирĕн руководительĕсене вĕлересе ĕлĕтпе пурăннă. Вĕсем тĕнчери чи хайăр бандит Троцкине йутçĕршывсенчи хăшпĕр патшалăхсен Генерăлăй Штăбĕсен задани йĕтем тăрăх ĕçлесе пынă.

Районри ĕçхалăхĕ сав-бандит предательсене, сывнĕлерекенсене перçе пăрахма, „сылтăм-троцкисла блокра" тăракан тăшмансене тĕпренех ĕлтерме ыйтат.

Ĕçсынсем Сталинпа Конституцине, Парти Тĕпкомĕн йăнăрту пленумĕн решенисене тата тĕплĕнрех вĕренсе, революцилĕ сыхăхăра ӳстерсе пыма, стахановла йухăма вăйлатса пыма обязательствăсем илеççĕ.

Çуй процесĕ çинчен выраксенсене йăлантăрса пама 24 коммуне района туха кайрĕç.

С. Соколов.

Халăх тăшманĕсене тĕпĕ тымарĕпех тăпăлтарăпăр

Чăваш республикинчи Верховнăй Суда Прокуратурă работникĕсен коллективĕ сылтăма-троцкисла блокăн контрреволюцилĕ бандине—Бухарина, Рыкова, Иагодана суд туни çинчен пĕлсен, фашисмăн çав ирĕçĕр агенчĕсен тăшманла, сутăнчăкла ĕçĕсем ширки шитĕ тарăхса тĕлĕнет. Вĕсем ирĕçĕн çĕршывра тепĕр хуть капиталисăм тума, çĕршыв территорине татăкласа тăкма тăнă, буржуалă национализмне хавхатантарăç, ирĕçĕн тăван çĕршывăн чи лайăх ывăлĕсене Куйбышев, Менжинский, Горький йулташсене ирĕçĕрĕн вĕлаççĕ.

Коллектив митингра çапла йышăнчĕ:

„Халăхăн пĕтĕм тăшмансене, фашисăмăн çăмăлтăк агенчĕсене—троцкисене, бухаринщăсене, зиновьевщăсене, 'буржуалă-националисене вĕçне çитичченех тĕпĕ-тымарĕпех тăпăлтарăпăр.

Енĕр ССР Союзĕн Верховнăй Сучĕн Çар Коллегийĕнче фашиссăмăн çăмăлтăк агенчĕсене—„сылтăма-троцкисла блока" пĕр хĕрсемсĕр перçе пăрахмала тума ыйтатпăр".

Громов.

Перçе пăрахмала!

Шупашкартри спирт заводĕнчи рабочисемпе служащисем, инженерпа-техникăпа работникĕсем „сылтăма-троцкисла блока" тăрса хăрушă та тискер ĕç тунă халăх тăшманĕсене— Бухарина, Рыкова, Чернова, Гринькона, Иагодана тата ытти сене те Совет халăхĕн Аслă Сучĕ унăн тăратнине пĕлнĕ хыççăн, митинг туса иртернĕç. Митингра туха калакансем пурте халăх тăшманĕсене перçе пăрахмала, совет сĕрпынине тăшмансенчен тасатмала, терĕç.

Митингра ĕнĕлленă резолюцире çапла каланă;

— Енĕр, рабочисемпе работницăсем, служащисемпе инженерпа-техникăпа работникĕсем пирĕн тăван сĕрпыпа Совет Союзне фашиссене сутма хатĕрленнĕ халăх тăшманĕсене — Бухарина, Рыкова, Иагодана, Чернова, Гринькона тата ытти сене те пĕтĕм чĕререн тарăхса илханатпăр. Вĕсем, халăх тăшманĕсем, пирĕн тăван сĕрпынăна фашиссене сутса, социализăм строительствине пĕтересе лартассăн, пирĕн Совет Союзĕнче телейлă те савăнăçлă пурăнăçа пурнăçлан халăха капиталисăм пусмăрлăхĕнчĕ усрасшăн пулнă. Çак троцкисла-бухаринла бандитсем ССР Союзĕнчи халăха йун айне, хăрушă та тискер асап айне тăвасшăн пулнă.

Çак бандитсем хăйсен тăшманла ĕçне пурнăçлас тĕлĕпне тĕрлĕ майсем шыранă. Вĕсем халăхăн йуратăк чи лайăх ывăлĕсене вĕлернĕ. С. М. Киров, В. В. Куйбышев, М. Горький, Менжинский йулташсем çак пăлăчсен тискер аллинчен вилĕе выртрĕç. Фабрик-заводсенче йăлхуçалăхĕнче те тăшмансем хăйсен ирĕçĕн ĕçне тума тăрăшнă.

Çаксем вĕсемшĕн ахалă иртмерĕç. Тăшмансем халь совет халăхĕн суйă умĕнче. Пирĕн мухтавлă Шăлти ĕçсен Халăх Комиссариачĕ малашне те тăшмансене тăрă пыш сине кăларса тĕпĕ тымарĕпех пĕтерĕс пырĕ. Вĕсем утăмсемпе пăтăрах малала кайса пыраканн социализăм строительствине никам та тарса лартма пултараймасть. Пирĕн тăван çĕршывра, Совет Союзĕнче капиталисăм ĕçĕрки туса хума тăрăшакансене—вилĕм!

Енĕр малашне те Шăлти ĕçсен Халăх Комиссариачĕне сыхăнса ĕçлесе пырса, халăх тăшманĕсене пĕр сыпă ӳкмиччен пĕтеретпĕр.

Енĕр çав бандитсене—Бухарина, Рыкова, Иагодана, Чернова, Гринькона тата ытти сене те перçе пăрахма ыйтатпăр.

Н. И. Бухарина, А. И. Рыкова, Г. Г. Йагодана, Н. Н. Крестинскине, Х. Г. Раковскине, А. П. Розенгольца, В. И. Иванова, М. А. Чернова, Г. Ф. Гриҫкона, И. А. Зеленскине, С. А. Бессонова, А. Икрамова, Ф. Ходжайева, В. Ф. Шаранговича, П. Т. Зубарева, П. П. Буланова, Л. Г. Левина, Д. Д. Плетнева, И. Н. Казакова, В. А. Максимов-Диковскине, П. П. Крӳчкова—вӗсем Совет Сойузне курайман тӑшманла йӳтсӗршы государствисен разведкисен заданийӗ тӑрӑх, йӳтсӗршыб государствисене майлӑ шпионла, диверҫисем, террорла ӗҫсем тӑвас, ССР Сойузӗн Çар хӑватне хавшатас, çак государствӑсене ССР Сойузӗ çине вӑрçӑпа танӑнма провокацилӗ ӗҫ тӑвас, ССР Сойузне вакласа пӗтерсе унтан Украинӑна, Белоруҫсине, Вӑтам-Азири республикӑсене, Грузине, Арменине, Азербайджана, Инҫет-Хӗвелтухӑҫӗнчи Приморйене татса илсе çав асӑннӑ йӳтсӗршыб государствисене парас, йӳлашкинчен тата ССР Сойузӗнчи хальхи социализмӑла общественӑлӑ тата государствӑлӑ стройа сирпӗтӗсе антарас, капиталисӑм йӗрвипе бӳржуази влаҫӗ туса хурас тӗллев тытнӑ „сылтӑмла-троцкисла блок“ текен заговорлӑ ушкӑн

ЁÇЁ ТӐРӐХ

АЙӐПЛАСА ÇЫРНИ

(Малали. Пуçламӗшӗ 51 (4864)-мӗш номӗрте)

Следстви материалӗсем тӑрӑх тата айӑпланакан Бухарин, Зубарев, Зеленский т. ыт. тӳррӗмех хӑйсем кӑтартса панисем тӑрӑх, çакна палӑртнӑ: вӗсем повстанически кадрсем хатӗрлес ӗнӗпне активлӑ ӗçленӗ, çак шутпа вӗсем ытларӑх районсем çинӑрса илме тӑрӑшнӑ, хӗçнӑшалла кӗрешӳ вальӑ кирлӗ базӑна ытларах анлӑлатас тӗллевпе заговор руководительӗсем ес-ерсен вӑрттӑн ӗçленӗ организацине пӗрле ӗçлеме килешӳ тунӑ.

Айӑпланакан Бухарин çапла кӑтартса панӑ:

„Ес-ерсемпе çыхӑну тытассине пӗркелеспе йӑнӑ сылтӑмпуçсен организацийӗ кулякла восстанисем çӗклеме тӗллев тытнӑ вӑхӑтра пулнӑ. Сылтӑмпуçсем çав восстанисене организацилеме шут тытнине курса, ес-ерсемпе,—йӑлтах кулаксен сийне тымар йӑрса тӑракансемпе,—çыхӑнма кирлӗ пулса тӑчӗ.

... Епӗ хам ес-ерсен Сойузӑн вӑрттӑн ӗçлекен Тӗпкомӗпе Семенов урлӑ çыхӑнтӑм, Членов урлӑ—ес-ерсен чикӗ лешӗнчи Парижри Тӗпкомӗпе çыхӑнтӑм.“

(т. 5, л. д. 90,91).

ССР Сойузне хирӗç йӳтсӗршыв государствисен интересӗсемшӗн чылай çулсем хушши хӑйсен сутӑнчӑкӑл ӗçсене пурнӑçа кӗртсе пынӑ „сылтӑмла-троцкисла блокӑн“ намӑсла ирсӗр-усал ӗçсӗсем çакӑн пек ӗнтӗ.

II. Совет государствин дейатӗлӗсене— С. М. Кирова, В. Р. Менжинскине, В. В. Куйбышева, А. М. Горькине вӗлерни

1918 çулта В. И. Ленина хирӗç тунӑ заговор

Совет стройне шпионаж, вредительствӑ, диверçисем, кулакла восстанисем метӑчӗсемпе сирпӗтесе пӑрахма май пултарасса шанмасӑр, ССР Сойузне хирӗç хӑйӑрлӑхпа, курайманлӑхпа антӑхакан сылтӑмла-троцкисла заговорщиксем правительствапа ПСК(б)П руководительӗсене хирӗç террорла ӗçсем тума тытӑннӑ.

Следстви çакна палӑртнӑ: Йапониппе Германи разведкисемпе тӳррӗмех килаçса тата халӑх ташманӗ Л. Троцкий пайӑ çыпӑнтӑм. „Сылтӑмла-троцкисла блок“ пирӗн çӗршывӑн чи лайӑх ывӑлӗсене хирӗç чылай террорла ӗçсем организацинеӗ, вӗсене тума.

Айӑпланакан Рыков, „сылтӑмла-троцкисла блок“ террор тӑвасси çине куçни çакӑнтан килнӗ, тесе кӑтартса панӑ:

„Сылтӑмпуçсен контрреволюцилӗ организацийӗ вӑрттӑн ӗçлекен заговорла характерлӑ пулнине кура, унӑн контрреволюцилӗ ӗçӗ вальӑн нимӗнле массӑлӑ базӑ та пулманнине кура, влаçа мӗнле те пулин урӑхла майпа алла илме шанчӑк пулманнине кура,—центр шухӑшӗпе террор çине куçни тата „дворцовой переворот“ малашхинӗн мӗнле те пулин шанчӑк намала пулнӑ“.

(т. 1, л. д. 50)

Айӑпланакан Бухарин, „сылтӑмпуçсисла блок“ 1932 çултах террор çулӗ çине тӑнине следствие йышӑнса, çапла кӑтартса панӑ.

„Çав 1932 çултах епӗ Пӗатаковпа тӗл пулса калаçнӑ чух вӑл Л. Седовпа тӗл пулса калаçни тата партине совет влаçӗ руководствине хирӗç террорла ӗçсем çине куçма Троцкий тӳрех пӗрӗ директивӑна Седов урлӑ илни çинчен пӗлтӗм. Çакна та йышӑнмала, чӑнине инсен, çавӑн чухне епӗр террорисемпе килӗшес çул çине тӑнӑ, епӗ Пӗатаковпа калаçни партипе совет влаçӗ руководствине вӑпа сирпӗтес тӗллеше Троцкипе пӗрле ӗçлеме килӗшни пулса тӑнӑ“.

(т. 5. л. д. 105 об).

Террорисем заговорла ӗçӗ хамӑр çершыва ташмана парӑмала тӑвас тӗллеше ӗçлессине тӑчӑн сыхӑнса тӑна. Ана, ака айӑпланакан Иванов çапла кӑтартса пани çирӗплетет:

„Террор çинчен калаçнӑ чух, Бухарин, пире влаçа хамӑр алла илме партипе совет влаçӗн çулпуçӗсене... „пӗтерни“, — çапла калаӑа вӑл,—хамӑра влаç патне пыма пит кирлӗ ӗçе пулать, тата вӑлах ССРС вӑрçара парӑмала тӑвассине пулашать, тенӗ“.

(т. 7, л. д. 71).

Çав тӗллеше пулнӑ решени тӑрӑх, заговорщиксен блокӗ террорисла ушкансем организацилес тӗллеше тата ПСК(б) Партине совет правительстви руководительӗсене вӗлересе йӗнӗпне практикӑла ӗçе хатӗрленес тӗллеше анлӑн ӗçлеме тытӑннӑ.

Вӑл тӗллеше айӑпланакан Рыков акӑ мӗн каласа панӑ:

„Çав вӑхӑт тӗлне террор пирӗн аллра совет влаçне хирӗç кӗрешмели майсенчен пӗри пулса тӑнӑ...

Çак позицирен пирӗн, вӑл шутран—маншӑн хамӑн та, политбӳро членӗсенне, партипе правительствӑ руководительӗсене, чӑн малтан — Сталина, Молотова, Кагановича тата Ворошилова вӗлерме хатӗрленес тӗллеше конкретлӑ ӗç тухса тӑчӗ. 1934 çултах епӗ хам организацинеӗнче Артеменкон террорисла ушкӑнне партипе правительствӑ руководителӗсен машинисене асӑрхаса тӑма заданипа“.

(т. 1, л. д. 150 об.—151).

Айӑпланакан Бухарин, ес-ӗр Семёнов террорисла ушкӑн организацине сӗнни çинчен калаçнӑ чух, çапла кӑтартса панӑ:

„Епӗ чӑнине каласа парассӑн, çапла пӗлтересшӗн, вӑл сӗнӳ çинчен епӗ центр канашлӑвӗнче каласа панӑ хыççӑн, Семёнова террорисла ушкӑнсем организацилеме хушрӑмӑр“.

(т. 5, л. д. 106 об.).

Следстви çакна палӑртнӑ, Ленинградри троцкисла-зиновьевла террорисла центр 1934 çулти декабрӗн 1-мӗшӗнче С. М. Кирова тискерле вӗлерни, çак ӗçпе айӑпланакансем тӑнӑ „сылтӑм-троцкисла блок“ йышӑнни тӑрӑх та пулнӑ.

Следстви çакна палӑртнӑ: çав тискерле вӗлернӗ ӗçе пулӑшакансенчен пӗри—айӑпланакан Йагода пулнӑ, вӑл çапла кӑтартнӑ:

„Заговор центрӗ йышӑннӑ тӑрӑх С. М. Кирова вӗлерме хатӗрленни çинчен епӗ Йенукидзерен малтанах пӗлнӗ. Йенукидзе мана çав терроргла ӗçе иртерме чӑрмантармала мар тесе сӗнӳ пачӗ, епӗ унпа килӗшрӗм. Çак шутпа епӗ Запорожеца Ленинградран чӗнтертӗм те, ӑна С. М. Кирова вӗлерме хатӗрленекенсене чӑрмантарма кирлӗ мар тесе кӑтарту патӑм“.

(т. 2, л. д. 209).

Çакнах следствие Запорожецпа Йенукидзе те çирӗплетсе калаӑ.

Сылтӑм-троцкисла изменниксемпе заговорщиксен тискерле террорисла ӗçе С. М. Кирова вӗлернипех чарӑнман.

Çак ӗçпе пулнӑ следствире палӑртнӑ тӑрӑх, А. М. Горький, В. Р. Менжинский тата В. В. Куйбышев „сылтӑм-троцкисла блокӑн“ пӗрлешӳлӗ центрӗ пана задани тӑрӑх пулнӑ террорла ӗçсем пирки вилнӗ.

Сылтӑм троцкисла заговорщиксем А. М. Горькине çаван пек халиччен илтмен тискерлӗхпе вӗлересси мӗнпе сӑлтав пирки пулни çинчен айӑпланакан Йагода çапла кӑтартнӑ:

„Сылтӑм-троцкисла организацин пӗрлешӳлӗ центрӗ чылай вӑхӑт хушши Горькине Сталинпа сывӑх тӑнинчен уйӑрма тӑрӑшнӑ. Çав шутпа Горький патне Каменева, Томскине тата ыттисене йӑнӑ. Анчах та çакӑнтан нимӗнле результатсем те пулман. Горький малтанхи пекех Сталина йӳратса ӗçленӗ, унӑн çулне тытса пырса унпа хӗрӳлӗн тӑнӑ. Сталинла руководствӑна пӗтерес тата влаçа сылтӑмтроцкиссем аллине илес ыйтӑва тӗплӗн лартнӑ хыççӑн, çӗршывра Горький пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнине, унӑн йӳтсӗршывсенчи авторитетне центр шута илмесӗр тӑма пултарайманӑ. Горький йӳлсан, вӑл пире хирӗç хӑйӗн протеслӑ сассине çӗклентерӗ пулӗччӗ. Епӗр ун пек пулассине килӗшме пултарайманӑ. Çавӑнпа та, пӗрлешӳлӗ центрӑн, Горькине Сталинран уйӑрма май суккине кура, Горькине пӗтересси çинчен йышӑнмала пулнӑ“.

(2 т., л. д. 200).

Йагода кӑтартса пани айӑпланакан Рыков кӑтартса панипе те çирӗпленет. Çак çултн йӑнварӗн 10-мӗшӗнче Сойузри прокурор тунӑ доприсра вӑл çапла кӑтартса панӑ:

„Контакт центрӗнче Троцкий хӑйӗн представительӗсем урлӑ Горькине хирӗç тем тӗрлӗ тискерле калаçни мана паллӑ пулнӑ. Горький Троцкине иртсе-çӳрекен тата авантюрис вырӑнне хуни çинчен Троцкий питӗ лайӑх пӗлсе тӑнӑ. Тепӗр ӗнченех, Горький Сталинпа çывӑх тӑни, çавӑн пекех тата вӑл политикӑ ӗнӗпне те Сталин майлӑ нимӗн пӑркаламни хӗрӳдех пулни—пирӗн организацийӗ ун çине тискерле пӑхтармала тунӑ“.

(1. т., л. д. 166 т. й.).

Айӑпланакан Рыков кун çумне çапла çухса панӑ:

„1935 çулта епӗ Йенукидзене калаçрӑм, вӑл мана тӳрех: блокӑн троцкисла-зиновьевла пайӗ Горькин политикӑлӑ активлӑхне пӗтерсе хума çине тӑрсах ыйтать тата çакна пурнӑçа кӗртӗс пулсан нимӗнле ӗç умӗнче те чарӑнса тӑмала мар,—тесе каларӗ. Çак калаçуран епӗ—Горькине пӗтересси пирки терроргла методсем çинчен те сӑмах пыма пултарнине анланса илтӗм“.

(т. 1, л. д. 166 об.—167).

Çакнах айӑпланакан Бухарин та çирӗплетнӗ, вӑл 1935 çул пуçламӗнче ӑна Томский çапла пӗлтернӗ тесе кӑтартса панӑ:

„...Блокӑн пӗрлешӳлӗ центрӗн троцкисла пайӗ сталинла политикӑ ӗнӗпе тӑракан А. М. Горькине хирӗç тӑшманла акт организацилесси çинчен сӗнӳ панӑ“.

(т. 5, л. д. 119 об).

Çакӑнпа пӗрлех, айӑпланакан Бухарин çапла ӑнлантарса панӑ: уй чухне сӑмах шӑпах ӗнтӗ Горькине иртсе-çӳрлесе вӗлересси çинчен пулма пултарнӑ, тенӗ вӑл. Сӑмах лап та шай М. Горькине иртсе-çӳрлесе вӗлересси çинчен пыни айӑпланакан Бессонов кӑтартса панинчен куранӑ, вӑл 1934 çулхи нӳҫ вӗçӗнче Л. Троцкийпе курнӑçнӑ вӑхӑтра, Троцкинчен çаван пек „установкӑ“ илнӗ. Айӑпланакан Бессонов кӑтартса панӑ тӑрӑх, курнӑçнӑ вӑхӑтра Л. Троцкий:

„...Епӗр Сталина тата унӑн сывӑх соратникӗсене пурне те иртсе-çӳрлесе вӗлерес ӗçе халех тытӑнмасан, вӑл вара каçарамала мар ӗç пулнӑ пулеччӗ...“—тесе пӗлтерсе, çапла каланӑ:

„М. Горький Сталина пит сывӑх тӑрать. Тӗнчери, уйӑрмах—Хӗвеланӑç Йевропари общественӑлӑ-демократлӗ шухӑша ССР Сойузӗ ӗнене çаврӑнма тӑвас çӗрте вӑл калама çук пысӑк выран йышӑнса тӑрать. Горький Сталинăн сывӑхран та сывах тусӗ пулни, вӑл партин тӗп çулӗпе пыракан çӗртсе пыракане пулни пурнӑçа кӗртсе пыракане пулни пурнӑçӗн те паллӑ. Интеллигенции пирӗн ӗнерхи сторонниксем Горький хыççӑн кайса чылайӗшӗ пирӗнтен уйӑрӑлаççӗ. Çак условире епӗ Горькине пуçтарамала, тесе вывӑт тӑваттӑп. Çак манӑн хушува ун татăкăй формӑпа Пӗатакова пӗлтерӗр: „Кирек мӗнле пулсан та Горькине пӗтерсе хумала“.

(т. 11, л. д. 74—75).

Халӑх тӑшманӗн Л. Троцкин çак кӑтартӑвӗ тӑрӑх „сылтӑмла-троцкисла блок“ А. М. Горькине вӗлересси çинчен хӑйӗн тӗлӗнмелетискер решение йышӑннӑ тесе ӗнтӗ.

„Çак решение пурнӑçа кӗртме мана хушнӑ“—тесе кӑтартса панӑ айӑпланакан Йагода.

Çакна пурнӑçа кӗртме Йагода М. Горький килти врачӗ пулса ӗç лекен, çак ӗçпе айӑпланакан Л. Г. Левин доктора, Д. Д. Плетнев профессора, А. М. Горький секретарне—П. П. Крӳчкова тата хӑйӗн секретарне П. Н. Буланова йӑвăрланӑ.

Çак тискер ӗçе организацидекенсенчен пӗри, айӑпланакан Буланов çапла кӑтартса панӑ:

„А. М. Горькине вӗлерес ӗçе Плетнев профессор, Левин доктор тата Горький секретарӗ Крӳчков тӳррӗмёнех хутшӑннӑ. Епӗ хам, сӑмахран, темиçе хут та Йагода хăй патне Крӳчкова чӗнинне курнӑ, вӑл ӑна Горькине шӑпах чирлеттерме канашпа панӑ, мӗнле майпа та пулсан Горькине чирлеттерме хушнӑ. Йагода: Горькин ӳкиссем çирӗплес мар, вӑл кирек мӗнле шанса чирлесен те пӗтме пулатӑр—теннӗ. Йӳлашкине вара Плетневпа Левин вӗлересе çитерӗс, вӗсен куçӗнпирки тивӗçлӗ заданисем пурӗ тенӗ.

(т. 16, л. д. 72).

Айӑпланакан Плетнев А. М. Горькине тата В. В. Куйбышева вӗлересе ӗçе тӳррӗмёнех хутшăннăскер, çапла кӑтартса панӑ:

„Йагода мана: çӗршывра хăшпӗр политикӑла руководителсене иркӗсӗрлесе вӗлересе ӗçре пулăшас пулать, тесе каларӗ. Вӑл маншӑн тӳррех епӗ В В Куйбышевпа А. М. Горький патӗнче сыватакан врач пулса ӗçленине усӑ курма тата тӗрӗс мар методсем пе сиплесе вӗсене вӗлересине хăвăртлатма хушрӗ. Епӗ килӗшмӗшӗн мар пулса хăтланса пăхрăм, анчах та йӳлашкинчен иркӗсӗрех килӗшмеле пулчӗ Çакăн хыççăн Йагода мана: сана пулăшакăнӗ Левин доктор пулать, А. М. Горький телӗшне куснăр пуçне тата А. М. Горький секретарӗ—П. П. Крӳчков пулать,—тесе пӗлтерчӗ.

Йăлăн çак хăрушă заданине йышăнса, епӗ Левин докторпа пӗрле А. М. Горькийне В. В. Куйбышева вӗлермели план туса хатӗрлерӗм.

Çакна йышăнмала пулать: епӗ çак преступленине тума килӗшӳ панă çӗрте манăн совета хирӗçле шухăшсем те хăйсен роӳне йышăннă. Епӗ хаман çав совета хирӗçле шухăшсене, икӗпитленсе тата епӗ совет çынни, тесе каласа, хама вӗрçлеччен пур майсемпе те пытарса пурăнтăм“.

(т. 18, л. д. 72—73)

Айӑпланакан Левин та çакна çирӗплетсе çапла кӑтартнӑ:

„Епӗ хама çакăншăн аййăлă тесе йышăнатăп: йурийех тӗрӗс мар сыватса тата ку чиршӗн йăрăхсăр емелсемпе усă курса, епӗ манпа еçленисемпе пӗрле, Йаголара килӗшнӗ тăрăх, Максим Горькине Куйбышева вăхăтĕр вĕлернĕшĕн айăпăлă пулна“.

(т. 17, л. д. 10).

Айӑпланакан Левинпа Плетнев А. М. Горькине В. В. Куйбышева вӗлерессине практикӑра мӗнле пурнăçа кӗртни çинчен следствире тепĕнех кăтартса панă.

Следстви тупса палăртнă тăрăх, В. В. Куйбышева вĕлернĕ çĕре В. В. Куйбышев секретарĕ—айăпланакан Максимов та активлăн хутшăнса ĕçленĕ, вăл çапла кăтартса панă:

„Çак преступленине тума епĕ сылтăмписен контрреволюцилĕ организацин членĕ пулнă май карăм, вăл организацинне епĕ 1928 çулта хутшăннă.

Епĕ контрреволюцилĕ организацинче тăнине Йагода та пĕлнĕ, вăл манăн Йенукидзене пулнă калаçусенче перинче, епĕр Куйбышева вĕлермели плана тунă чухне пулчĕ“.

(т. 20, л. д. 45 об).

Йагода тӳррĕн кăтартса панă тăрăх, айăпланакан Левин доктора Казаков доктор ОГПУ председателне В. Р. Менжинскине вĕлерĕ.

Айăпланакан Казаков кăсăлни февралĕн 4-мĕшĕнче Сойузри про курор тунă допросра çапла кăтартса панă:

„Йагода мана Менжинский ман тата лайăх кăмăллă пулни тата мана шанса тăни çинчен пĕртăнчĕ. Çавăнпа манăн Левин докторпа пĕрле Менжинскинĕ вĕлермĕ-ĕç тухасси çинчен каларĕ. Йагода мана çакăн пек кăтарту пачĕ: манăн Левин докторпа пĕрле, В.Р. Менжинскине сыватма, унăн вилĕмне хăвăртлатакан та унăн унăн пурнăçне мĕнле те пулин хăвăртрах пĕтерме май пăракан меслет туса хатĕрлемелĕ“.

(т. 19, л. д. 51).

Малăла айăпланакан Казаков çăлне Йагода хушшинче В.Р.Менжинский вилĕмне хăвăртлама кирли пирки мĕнле каласу пулни çинчен каласа çакна кăтартнă:

„Йагодапа пулнă çав каласу хыççăн епĕ Левинпа пĕрле В.Р. Менжинскине сыватма, унăн йăлашки вăйăсене çĕмĕрме тăкса вилĕм хăвăртрах илсе килекен меслет хатĕрлерĕм. Епĕ тата Левин В.Р.Менжинскине чăнине çавнашкал вĕлертĕмĕр.

Епĕ Левин доктора хам хатĕрленĕ лизат хутăшĕсенчен тунă емел патăм, вăл емел вĕлколоидсемпе хутăштарсан кирлĕ результат парать, çапла каласан—Менжинскине чăнинпех вилĕм патне илсе пычĕ“.

(т. '19 л. д. 51).

Çаксене айăпланакан Л Г. Левин та, П. Буланов та, пĕтĕмпех çирĕплетнĕ.

Айăпланакан Л Г. Левин хăй Йагодаран В Р.Менжинскине вĕлерме кăтарту илсен вăл, Левин, çав хушша пурнăçа кĕртме Казаков доктора хутшăтарнине çирĕплетсе панă.

Айăпланакан Левин çакна кăтартнă:

„Епе, вăл ĕçе никамран та лаăхрах Казаков пултарать тесе каларăм, мĕншĕн тесен вăл хăйĕн лабораторинче контрольсăрах тунă препаратсемне ĕçлет, аплатăк, вăл мĕнле емел панине пĕр вăл анчах пĕлме пултарать.

Казаковпа малтанлаçа калаçнă хыççăн, епĕ ăна Йагода мĕн хушни çинчен каласа патăм. Вăл малтан преступленине ӳçса палăртасран хăраса хытă пăркаланалчĕ, кайран килĕшрĕ. Епĕ вăл мĕнпе усă курни çинчен ыйтман, анчах ку тĕлĕшпе унăн аллинче пысăк майсем пурри çинчен епĕ пĕлнĕ.

В.Р.Менжинскин вилесси çывăрнă чухне, ăнсăртран йăнăшмастăп пулсан—Максим Пешков (А.М. Горький ывăлĕ) вилес умĕн чĕре параличĕпе пулчĕ. Епĕ ку ĕçе Казаков алли туни пирки иккĕленмен те“. (т.17 л.д, 54—55).

Айăпланакан Буланов В. Р. Менжинскине вĕлерни çинчен çакна кăтартнă:

„Менжинскине вĕлересснне Йагода тахçанах шутласа хунă. Вăл манăн умра Межинский халĕ те пурăннине ОГПУ руководителĕн постинче пулнине килĕшменни çинчен пĕр хутчен çеç мар каланă. Кайран вăл Менжинскине вĕлерме кирлĕ тесе тӳррĕнех каларĕ. Ку ĕçе Левин доктор урлă организацилеме йăвăр пулнă, мĕншĕн тесен Менжинский Левина йăратмасчĕ, унăн патĕнче сывалассăн та марччĕ. Вара епĕ Йагодана Менжинский патне мĕнле те пулин урăх врача „çирĕплетме“ каларăм. Çапла тунă та, Левин доктор пулăшнине Менжинский патне Казаков доктора „çирĕплетрĕмĕр“, вăл вара ĕçе вĕçне çитийех вĕçлесе çитерчĕ, урăхла каласан—тĕрĕс сиплесе пымасăр Менжинский вилĕмне хăвăртлатрĕ“.

(т. 16. л. д. 75).

Айăпланакан Левинпа Крӳчков А. М. Горькине тата В. В. Куйбышева вĕлерниçĕр пуçне, Йагола тӳррĕн кăтартса панă тăрăх çавăн пек майсемпех 1934 çулта А. М. Горький ывăлне— М. А., Пешкова вĕлерне:

Ку тĕлĕшпе айăпланакан Левин çакна кăтартнă:

„ Максима хам вĕлернине йышăнса, епĕ кунта вăл ĕçе Йагода тӳррĕн хушни тăрăх туни çине кăтартса парассăн. Манăн вăл ĕçе тумасăр тăма граждăнла хăйлăх çитмерĕ, вара епĕ çынвĕлерен пулса тăтăм“

(т, 17, л. д. 138).

Йагода организацинеӗнче преступленисемне активлăн хутшăнă айăпланакан Крӳчков çапла кăтартнă:

„Çак преступленисене тунă çĕрте епĕ сылтăмписен Совета хирĕçле организацин хăшпĕр руководителĕсем панă кăтартусем тăрăх ĕçлесе пытăм. Тӳррипех каласан именно Йагода кăтартнисемпе. Максим Пешкова, унтан Алексей Максимович Горькине вĕлерме панă кăтартăва епĕ Йаголаран илтĕм“.

Çав преступленисене тума Йагола максăр пуçне тата Левин, Виноградов врачсене тата Плетнев профессора йăвăçтарнă“.

(т. 21, л. д. 16).

Айăпланакан Йагода М. А. Пешкова хăй патнă заданине вĕлернине çирĕплетсе çакна кăтартса панă:

„1934 çулти май уйăхĕнче Крӳчков пулăшнипе Макс (М. А. Пешков) ӳпке чирĕпе чирлерĕ, Левинпа Виноградов тата Плетнев ăна вилмелех сиплерĕç“.

(т. 2, л. д. 193).

Айăпланакан Йагода хăйне ССР Сойузĕн Шалти Ĕçсен Халăх Комиссарĕнчен кăларнă хыççăн, ССР Сойузĕн Шалти Ĕçсен Халăх Комиссарне Н. И. Йежов йӳлташа вĕлерес ĕçе пурнăçа кĕртес тĕллеше пе ĕçлеме тытăннă.

Айăпланакан Йагода следствире Н. И. Йежова хирĕç террорла ĕç тăвассине мĕншĕн хăвăртăн туса иртерме хатĕрленине çапла аннантарса панă:

„Мана Шалти Ĕçсен Халăх Комиссариатĕнче ĕçлессинчен хăтарни, ман вырăна Йежов пынипирĕн заговор йăлтах саланса кайассине цĕлтерĕм, мĕншĕн тесен совета хирĕçле организацин кадрĕсене çапса аркатасшăнни тытса тăма май пулмасăр. Йежов пурне те шыраса тупать,—Йежовран çăлăнмала. Ку манăн пĕртенĕр решени пулнă, епĕ çак ĕçе тума татăкланăнах хатĕрленме тытăтăм“.

(т. 2, л. д. 141—142).

Йагода хăйĕн шухăшне хăйĕн сыннисем урлă пурнăçа кĕртме хăтланнă, вĕсем хушшинче айăпланакан Буланов пеллă вырăнта тăнă.

Айăпланакан Йагода тата айăпланакан Буланов йышăннă тăрăх, Н. И Йежов йӳлташа йăтăранласа хатĕрленĕ наркăмăш парса вĕдермелле пулнă.

„Йагодана Шалти Ĕçсен Халăх Комиссариатĕнче кăларсан,—каласа панă айăпланакан Буланов,—вăл мана тата хăйĕн личнăй ĕçĕсене тавăканне, Савоблайнена, Йежова наркăмăш парса вĕлерме задани пачĕ“.

(т. 16, л. д. 27).

Айăпланакан Йагода Н. И. Йежова мĕнле майпа вĕлерме хатĕленни çинчен тĕлĕн качаса панă хыççăн, айăпланакан Буланов, Йежов йӳлташа вĕлерме хăй наркăмăш хатĕрленни çинчен калать.

Айăпланакан Йагода ССРС прокуратурине допросра хăйĕн çак айăпсĕсене пĕтĕмпех йышăнса çапла калать:

„Йышăнма тивет, епĕ çак преступленине хатĕрленĕ. Епĕ контрреволюцилĕ заговорăн хăрушă, пирĕн контрреволюцилĕ организацине тăрă шыв çине кăларма пултаракан çынна, Йежова, вĕлерме хатĕрленессине, организацилĕрĕм“

(т. 2, л. д. 209).

Çапла ĕнтĕ, следстви çакна ниме иккĕленмелле мар палăртнă пек шутлать: çак ĕç тăрăх çуд умне тăратнă „сылтăмла-троцкисла блока“ йĕртсе пыракансем С. М. Кирова, В. Р. Менжинскине, В. В. Куйбышева, А. М. Горькине, М. А. Пешкова хирĕç террорла ĕç тунă, тата ыттисене хирĕç террорла ĕç тума хатĕрленнĕ, анчах вĕсене ĕçе кĕртме май килмен.

Совет влаçĕн дейатĕлĕсене вĕлерсе пирĕн тăван çĕршывăн вăл-хăналă çӳп-çăпĕсем, патша охранки провокаторĕсем, йӳтсĕршыв капиталисĕсене пирĕн çĕре, иреклĕхе сутнă йӳтсĕршыв разведкисен тарçисем совет стройне пĕтерсе пирĕн çĕршывра капиталисăма кăйала тавăрмали фашисла плана. ĕçе кĕртме ĕмĕтленнĕ.

* * *

Халĕ палăртса ситерме тăрăх, çак тискер ĕçсем троцкиссемшĕн те, сылтăмписемшĕн те ăнсăртран пулман.

Следстви çакна палăртнă: 1918 çултах, Октябĕрти революцин хыççăн, Брестра мирлĕ килешӳ тунă тапхăрта, Бухаринпа унăн „сулахай“ коммунисем текен ушкăнĕ тата Троцкий ушкăнĕ „сулахай“ ес-ерсемпе пĕрле, совет правительстви пуçлăхне В. И. Ленина хирĕç заговор организацинеӗнче.

Бухаринпа ытти заговорщиксем Брест мирне арканаса йăма, совет правительствине сирпĕтес антарма, В. И. Ленина, И. В. Сталина, Йа. М. Свердлова арĕслесе вĕлерме, çапла вара, хăйсене чĕм „сулахай“ коммуниссен йăтне пана Бухаринăсенчен, троцкиссенчен, „сулахай“ ес-ерсенчен сĕнĕ правительствă тума шутланă.

Çак çулăн февралĕн 19-мĕш тата 22-мĕшĕнче допросра „сулахай“ ес ерсен тĕп комитет членĕ пулнă В. А. Карелин ес-ерсемпе Бухаринăсен 1918 çулти заговорла ĕçсем çинчен çапла каласа панă:

(Йулашки 3-мĕш страницăра).

АЙĂПЛАСА ÇЫРНИН ЙУЛАШКИ

(Пуçламăшĕ 2-мĕш страницăра)

„Ленин, Сталин, Свердлов йĕртсе пыракан совет правительствине хирĕç кĕрешес ĕçре „сулахай“ коммунниссемпе тăкăлă кĕлĕшӳ тăвассине епĕр коммунниссен партии VII-мĕш сĕвĕç хыççăн туса сунтертĕмĕр. „Сулахай“ коммунниссемпе „сулахай“ ес-ерсен тĕпкомĕ хушнă тăрăх Камков, Прошйан тата епĕ каласа“.

(т. 44, л. д. 86).

Çав каласусем мĕнле пулни çинчен тата ку ĕçпе айăпланакан Н. И. Бухарин мĕнле выртăнăтăнни çинчен В. А. Карелин çапла каласа панă:

„Бухарин сĕнĕвĕ çапла пулнă—правительствăна арĕслеппине чăрăнăла мар, совет власăн руководительĕсене, чи малтан Ленинпа Сталина вĕлерес пĕтермеле“.

(т. 44, л. д. 38).

Кăна çак ĕç тăрăх допрос тунă ытти свидетелсем те сирĕплетнĕ.

„Сулахай“ ес-ерсен партии тĕп комитечĕн руководительĕсенчен пĕри пулнă В. Д. Камков çапла каласа панă:

„Епĕ хам Бухаринпа каласрăм, вăл мана çакăн майлăрах каларĕ: „Брест“ мир шăтăвĕ тăрăх пирĕн партире Ленин позицине хирĕç кĕрешӳ сивĕчленсе пырать. Пирĕн ретсенче „сулахай“ ес-ерсемпе „сулахай“ коммунниссенчен çĕнĕ правительствă тăвасси çинчен шăтăк тăрать. Çакна каланă чухне Бухарин çĕнĕ правительствăн руководителĕн кандидачĕ пулма пултаракан сын йăвĕ вырăнне Плетаков йăтăнас ăсăнчĕ тата правительствăна улăштарассине Ленин йĕртсе пыракан çĕнелленине тума шутланă çинчен каларĕ.

Бухаринăн малашнехи калаçăвĕсем Кумелинпа тата Прошйанпа пулнă. Март уйăхĕн вĕçĕнче „сулахай“ коммунниссемпе „сулахай“ ес-ерсем хушшинче çакăн пек татăкла килĕшӳ тунă пулнă: 1) „сулахай“ коммунниссем большевиксене тата совет правительствине хирĕç кĕрестес ĕçпе „сулахай“ ес-ерсене организацилĕ тата политикăла пулăшу парса пырасси; 2) „сулахай“ коммунниссемпе „сулахай“ ес-ерсем пĕрле ĕçлесе пынине Ленин правительствине сирпĕтес антарса, „сулахай“ коммунниссене „сулахай“ ес-ерсене кĕртсе çĕнĕ правительствă тăвасси пулнă.

Кун хыççăн „сулахай“ ес-ерсем Мирбаха вĕлĕрес ĕçе тата ыйăти пăлхава организациленĕ. Мирбаха вĕлерессине тата ыйăти пăлхава хатĕрленессине „сулахай“ коммунниссем пĕтĕмпех пĕлсе тăнă“.

(т. 44, л. д. 92 об.).

ССР Сойузĕн Прокуратурине çак çулти февралĕн 19-мĕшĕнче пулнă допросра „сулахай“ коммунниссен ушкăнĕнче активлăн ĕçлеçнисем тата унăн малтанхи руководительĕсем пулнă Н. В. Маклакова, В. В. Осинский тата В. И. Мануцев, айăпланакан Бухарин пуçарувĕ тăрăх „сулахай“ коммунниссенчен тата „сулахай“ ес-ерсенчен совет правительствин пуçлăхне В. И. Ленина хирĕç 1918 çулта заговор тăвăнах та пулни çинчен пĕтĕмлетсе панă.

Н. В. Маклакова кăтартнă:

„Мана Бухарин политикăла кĕрешӳ вăйланса пыни çинчен тата ес Парти Тĕпкомне шанма марри çинчен, политикăла формалировкăсем панине кăна чăрăнса ăма сухăн çинчен каларĕ. Бухарин: ку ĕç пирĕн пĕрех руководствăна улăштарасси патне çитмелĕ, çакна мăй кăтарнă Ленина, Сталина тата Свердлова вĕлересси çинчен тата вĕсене вĕлересси çинчен тăрăт, тесе пĕлтерчĕ“.

(т. 55, л. д. 77).

В. В. Осинский ку ыйту тăрăх çакна кăтартă:

„Ленин правительствине сирпĕтес антармăн майсем çинчен епе Н. И. Бухаринпа калаçна... 1919 çулхи май уйăхĕ тĕлнеле (йĕ апрель уйăхĕн вĕçĕнче) епе Бухаринпа калаçнă чухне епе унтан: Ленин правительствине арĕслесси çинчен пур пек сведенисем мĕн чухлĕ тĕрĕсси çинчен шăтăк шĕлтĕм.

Бухарин çавăн пек шухăшсем пуррине хирĕслемерĕ“.

(т. 44; л. д. 54).

Çак „мерăсем“ çинчен калăнă чухне **В. В. Осинский** кăтартнă:

